Обществăлла выльăх-чĕрлĕх фермисене хĕле хатĕрленĕ май

Ырă пуçарусене çухатас марччĕ

Çанталăк условийĕсене кура ылтăн кĕркунне пуçланать анчах-ха. Çакă вара – çитес хĕлĕн пĕрремĕш хыпарçи. Çу кунĕсенче тулăх ĕçлени хĕл кунĕсене тутă тăвайĕ-ши? Çак ыйту паян ял хуçалăхĕнче тăрăшакан кашни ĕçченех канăç памасть. Юлнă ăшă кунсемпе усă курса хĕле хатĕрленсе тата мĕнле ĕçсене пурнăçламалла-ха, мĕн тума эпир халлĕхе каях юлман-ха? Ку ыйтусем çине пирĕн паян хурав памалла. Ахальлĕн ыран ...

Районти пĕрлешӳллĕ хуçалăхсем обществăлла выльăх-чĕрлĕхе ăнăçлă хĕл каçарма епле хатĕрленнипе кăсăкланса район хаçачĕн сотрудникĕ А. БЕЛОВ район администрацийĕн пуçлăхĕн çумĕпе тата ял хуçалăх пайĕн ертӳçипе В. АНАНЬЕВПА тĕл пулнă, район администрацийĕн ответлă ĕçченĕсем иртнĕ эрнере фермăсене хĕле хатĕрлессипе кăсăкланса вырăнсене çитсе курнин пĕтĕмлетĕвĕпе интересленнĕ.

– Владислав Кириллович, выльăх-чĕрлĕх фермисем хĕле хатĕри тата ку тĕлĕшпе лару-тăру ăçта еплерех?

– Районти ял хуçалăхĕ епле çу каçнине пĕтĕмлетме ыйтакан ыйту. Чăнах та, епле ирттертĕмĕр-ха çу кунĕсене, хĕл сиввисене кĕтме фермăсене хатĕрлесе çитертĕмĕр-и-ха? Ку ыйтусемпе эпир пĕрремĕш кун мар ĕнтĕ ĕçлетпĕр. Кам çывăрман – вăл хĕле хатĕр, кам хĕл кунĕсене кĕтмен – вăл шелсĕр рынок авăрне анса кайĕ. Ыранхи кун йăлтах хамăр алăра. Хĕл кунĕсенчи йывăрлăхсем, куратăр пулĕ, йăлтах паян никĕсленеççĕ. Вĕсем сахалрах пулччăр тесе ĕçлемелли кунĕсем те шутлă çеç юлчĕç ĕнтĕ. Анчах вĕсемпе те тухăçлă усă курасчĕ.

Сирĕн ыйтăвăр çине конкретлăрах хуравласа çакна калама пултаратăп: Ильич яч. хис., «Свобода», «Оринино», Ленин яч. хис., «Ударник», «ВТМ», «Восток», «Герой», Суворов яч. хис. хуçалăх фермисем, «Лидер» агрофирмăн Ярапайкассинчи сĕт ферми пĕтĕмĕшле майлах хĕле хатĕр. Вĕсемпе пĕрлех «Сеятель» хуçалăхăн сысна ферминче, «Передовик» хуçалăхра хĕле хатĕрленессипе паян ĕçсем пыраççĕ.

– Ыттисем вара хĕл пирки шутламаççĕ-и?

– Шутламаççĕ тесе çирĕплетсех калас килмест, анчах выльăх-чĕрлĕхе çу уйăхĕнче улăх-çарана кăларнăранпа фермăсемпе сарайсенче пăта çапма та çын тупайманни хăех сирĕн ыйтăвăр çине хурав парать. Акă Чапаев ячĕпе хисепленекен ял хуçалăх производство кооперативĕн Отарккари сĕт ферминче лару-тăру хĕл уменхи мар. Сарайĕнчен темиçе кун тислĕк кăларманнипе кунта тислĕк шывĕ тинĕс пекех тулса ларнă, доярка çуккипе тĕрĕслев кунĕнче 33 ĕнерен тăракан ушкăн сăвăнман, сăвăм пĕр ĕне пуçне талăкра вăтамран 3,7 килограмм çеç ларать. Сĕт ферминче заведующи çукран унăн ĕçĕсене сысна фермин заведующийĕ пурнăçлама тăрăшать. Ку лару-тăру хĕле кĕрсен татах йывăрланасси паянах шухăшлаттарать. Çакăн евĕр лару-тăру «Хлебороб» чикĕллĕ яваплăхлă обществăра та. Апчарти ĕне ферминче 56 ĕне. Вĕсем тивĕçлипе пăхманран тислĕкре тăраççĕ, улăм сарса паман, пӳлĕмсем таса мар. Хĕле кĕрсен мĕн курăпăр? Çак ыйтăвах «Рассвет» агрофирмăра та малта тăрать. Пукрав çывхарать пулсан та, юсав ĕçĕсем çивĕч ыйтакан фермăсенче юсав бригадисем çук. Вомпăкассинчи фермăра шыв пăрăхĕ те, тислĕк кăлармалли транспортер та ĕçлеççĕ, анчах юсав ĕçĕсем вырăнтан та тапранман. Çав вăхăтрах Мăн Тутаркассинчи сысна ферминче шыв пăрăхĕ юсав ыйтать. Ĕç укçипе парăм çук пулсан та, вăл пĕчĕкрен ĕçлекенсем çитмеççĕ.

Хĕле хатĕр мар фермăсенче санитари лару-тăрăвĕ те савăнтарсах каймасть. Вĕсенчи выльăх йышĕ те ырине кăна шантарать.

Çакна та каламалла: хĕле пĕтĕмĕшле хатĕрленсе çитнĕ текен фермăсенче те сарайсенче ăшă тытассипе паян-ыран тумалли ĕçсем чылай. Нихăшне те кая хăварас марччĕ. Çакă вăл йăлтах хуçалăхсем хĕлле продукци илесси çине витĕм кӳрĕ.

– Продуктивлăх терĕр те, унăн ку таранччěнхи кăтартăвĕ çинче чарăнса тăрар-ха. Хĕл кунĕсенче выльăх пăхакансен мĕн çине таянса ĕçлемелле?

– Кирек ăçти пекех, выльăх-чĕрлĕх отраслĕнче те пĕр ĕç тепринпе тачă çыхăннă, çавăнпа пĕри тепринчен тухса пырать. Ыйтусем нумай. Вĕсем çине эпир паян тулли хурав параймасан, производство каялла каясси хĕл кунĕсенче те хăйĕн утăмĕсене чакармĕ. Ку вăл вара пĕтĕмпех районăн ыранхи кунĕпе çыхăннă. Кăçалхи январь-август уйăхĕсенче районти пĕрлешӳллĕ хуçалăхсем пĕтĕмпе усă куракан 100 гектар ял хуçалăх çĕрĕ пуçне 33,6 центнер аш-какай (пĕлтĕрхипе танлаштарсан 80,1 процент), 169,2 центнер (86,3 процент) сĕт туса илнĕ. Çакă вăл пĕтĕмĕшле производство çинче те курăнать. Çулталăк пуçланнăранпа хуçалăхсем пĕтĕмпе илнĕ продуктивлăх та пĕлтĕрхинчен пĕчĕкрех. Çапла вара пирĕн хуçалăхсем кăçал пурĕ 1462,8 тонна (79,1 процент) аш-какай, 7357,4 (85,3 процент) тонна сĕт туса илнĕ. Çакăн çине выльăхсен йышĕ пĕчĕкленни те витĕм кӳрет. Сентябрĕн 1-мĕшĕ тĕлне кăçал районти хуçалăхсем майракаллă шултра выльăхсен йышне пĕлтĕрхинчен 1280 пуç, ĕнесен кĕтĕвне 506 пуç, сыснасен йышне 7435 пуç сахаллатрĕç. Çакнашкал тĕксĕм ӳкерчĕк пур çĕрте те пĕрешкел пулманни алă усмалла маррине пĕлтерет, ĕçлесен йывăрлăхсене çĕнме май пурри пирки калать. Акă кăçалхи лару-тăрура та «Свобода», Суворов ячĕпе хисепленекен ял хуçалăх производство кооперативĕсемпе «Лидер» агрофирмăра майракаллă шултра выльăхсен, «Агро-урожай» хупă акционерлă обществăра сыснасен йышне хушнă, «Восток», «Герой», Ильич яч. хис., «Оринино», «Свобода», Суворов яч. хис., Чкалов яч. хис. хуçалăхсенче ĕнесен кĕтĕвне унччěнхи шайрах сыхласа хăварнă. Нумай хуçалăхсенче ĕç кăтартăвĕсем каялла кайрĕç тесе пăхсан та, мал туртăмлă пурăнакансем кăçалхи сакăр уйăхра иртнĕ çулхи çак вăхăтринче ӳсĕмлĕрех ĕçлеме мехел çитернине палăртмасăр та иртме çук. «Герой», Ильич яч. хис., Ленин яч. хис., Суворов яч. хис., Чкалов яч. хис. хуçалăхсем сĕт сăвассине ӳстерчĕç. Апла пулсан хуçалăхсем тĕрек çулĕ çине тухрĕç. Çак ӳсĕмсене асăннă хуçалăхсенчи выльăх-чĕрлĕх патĕнче вăй хуракансем хĕл кунĕсенче сыхласа хăварма хатĕрри вырăнсенче çу кунĕсенче выльăх апачĕ хатĕрлессипе çанă тавăрса ĕçлени те çирĕплетсе парать. Вĕсемпе тухăçлă усă курасси – хĕл кунĕсенчи тĕп тĕллев.

Пĕрлешӳллĕ хуçалăхсенче

Ĕнисем сахалрах – сăвăм ытларах

Паянхи куна районти ял хуçалăх производство кооперативĕсемпе ял хуçалăхĕн ытти харпăрлăх формисемлĕ предприятийĕсенче 2641 пуç сумалли ĕне тăрать. Ку вăл çитес хĕле кĕрес умĕн. Иртнĕ çул çак тапхăрта асăннă хуçалăхсенче пурĕ 3147 пуç сумалли ĕне пулнă. Вĕсем пĕлтĕр пĕтĕмпе сентябрĕн 20-мĕшĕ тĕлне 28219 килограмм сĕт панă пулнă тата пĕр ĕне пуçне тивекен талăкри вăтам сăвăм 9 килогрампа танлашнă пулсан, 500 пуç ĕне «çухатни» хуçалăхсем 1900 килограмм сĕт суса çитерейменни пирки калать. Апла пулсан выльăх-чĕрлĕх патĕнче ĕçлекенсем сахалрах выльăхпах ытларах продукци илес çул çине тăнă. Çакă вырăнсенче çĕнĕ технологисемпе анлăрах усă курнине те çирĕплетет.

Ĕне тытакансем тухăçлăрах ĕçлеме тăрăшаççĕ пулсан, вĕсемпе юнашарах сĕт отраслĕ çине алă сулнисем те çук мар. Акă çулталăк хушшинче «Волга» тата «Чемеево» хуçалăхсем ĕнесене пĕтĕмпех пĕтернĕ (пурĕ 250 пуç). Çав вăхăтрах «Лидер» агрофирмăпа «Хлебороб» чикĕллĕ яваплăхлă общество ĕнесем туяннă (пурĕ 104 пуç). «Хлеборобсем» ĕне пуçне паян 5,5 килограмм çеç сĕт саваççĕ пулсан, «Лидер» агрофирмăн кăтартăвĕ – 12,5 килограмм. Иртнĕ çулталăк хушшинче ĕне кĕтĕвне чылай чакарнисем хушшинче Е. Андреев яч. хис. (35 пуç), Ленин яч. хис. (12 пуç), «Передовик» (23 пуç), «Сеятель» (31 пуç), «Рассвет» (203 пуç), Чапаев яч. хис. (16 пуç) хуçалăхсем. Çакнашкал сăн ӳкерчĕкре хуçалăхсем кăçал çитес хĕле кĕме утăна мĕн палăртнин 75 процентне (7237 тонна), сенажăн 66 процентне (5960 тонна), силосăн 68 процентне (25035 тонна) кăна хатĕрленине те ăнланма пулать.

Ĕçлĕ çул çӳреврен

Пушă сарай тупăш парать

Раççейре «АПКна аталантарасси» наци проекчĕ ĕçлеме пуçлани пуçарăллă çынсене ял хуçалăхĕ çине ытларах çаврăнса пăхма май пачĕ. Алăри пӳрнесем те тан мар та, пур çĕрти ĕçсем те пĕрешкел ӳсĕмпе пулса пыраймаççĕ. Пĕрин ĕçĕпе теприне паллаштарасси вара – массăллă информаци хатĕрĕсенче ĕçлекенсен тĕллевĕ.

Чăваш Республикин ял хуçалăх академийĕн кадрсем вĕрентсе хатĕрлекен институчĕ çĕнĕлĕхсене ыттисенчен маларах алла илекенсен тĕслĕхне сарассине тĕпе хурса пырать. Иртнĕ çу кунĕсенче вăл йĕркеленĕ ушкăнпа мана хамăр республикри тата кӳршĕ регионсенчи тухăçлă ĕçлекен ял хуçалăх предприятийĕсенче пулма тӳр килчĕ. Мĕн тетĕр эсир? Паянхи йывăрлăхсене çĕнсе ĕçлекенсем таврара çук мар.

Ĕçлĕ экскурсие Шуршăлти «Позитив» хупă акционерлă обществăран пуçларăмăр. Унччен выльăхсемпе тулли тăнă сарай рынок хутшăнăвĕсенче пушансан, кунти пуçаруллă çынсем ăна юхăнма паман. Сарайне бетон сарса тата стенасене юсаса тислĕкпе тулса ларнă ферма территорийĕнче биогумус кăларассине йĕркеленĕ. Биогумус вăл çĕр структурине активизацилеме старт паракан удобрени. Ăна гектар пуçне 200-300 литр парсан (типĕ кĕрпене литрпа виçеççĕ) минераллă удобрени парасси чакать, тухăç вара самай ӳсет. Биогумуса пĕр гектар пуçне 200 литр пани 3-4 çул витĕм кӳрет.

– Биогумуса ферма таврашĕнче тулса ларнă тислĕкрен хатĕрлетпĕр. Кăна валли хăйĕн технологийĕ пур. Сарайне кĕртсе хурса пĕлсе çĕртнĕ тислĕке вăхăт çитсен ятарлă ăмансем яратпăр. Вĕсем вара çак тислĕке хăйсем витĕр кăларса пире валли биоудобрени хатĕрлеççĕ. Ăна эпир ятарлă сушилкăпа типĕтсе сутлăха кăларатпăр. Пĕр тонна тислĕкрен 60 процент биогумус тухать. Пирĕн продукципе ял çыннисем, фермерсем, пĕрлешӳллĕ хуçалăхсем анлă усă курма пуçларĕç, – ăнлантарчĕ цех пуçлăхĕ А. Самсонова.

Пушă сарай тупăш пани мар-и-ха ку? Ĕç вырăнĕ те пур, ĕç укçийĕ те пĕчĕкех мар, ĕçĕн витĕмĕ те куç умĕнчех. Тен çак çĕнĕлĕхе районта та алла илес текен пур?

А. ПЕТРОВ.

Çĕнĕ рубрика – «Милици кунне халалласа»

Пĕр шырав тепринпе «пуянланчĕ»

Ноябрĕн 10-мĕшĕ – Раççей милицийĕн профессиллĕ уявĕ. Унччен вăхăт чылай-ха, тейĕ вулакан. Эпир те унпа килĕшетпĕр, анчах çĕнĕ рубрикăна маларах уçса хамăр йĕрке хуралçисен ĕçнехĕлне вулавçăсене анлăрах та тĕплĕнрех уçса парас тĕллев тытрăмăр. Паянхи тĕслĕхре районти шалти ĕçсен пайĕн следстви уйрăмĕн следователĕ, юстици капитанĕ Николай Геннадьевич Петров милицие пĕлтернĕ йĕркесĕрлĕхе тĕпченĕ май тĕпчев ĕçне йĕрке пăснă ытти фактсемпе пуянлатни пирки. Вĕренĕн, темĕн чухлĕ явăнсан та, вĕçĕ пулатех. Шăпах çакăн пек пулса тухнă та ку хутĕнче.

Сăмах май, Н. Петров районти шалти ĕçсен пайĕнче çулталăк кăна ĕçлетха, анчах профессиллĕ ĕçре самай опыт пухма ĕлкĕрнĕскер, кĕске хушăрах çĕнĕ коллективра хăйĕн вырăнне тупрĕ. Преступленисене уçса панишĕн тата уголовнăй ĕçсене çӳллĕ шайра туса пынăшăн çак хушăрах ăна шалти ĕçсен пайĕн пуçлăхĕн приказĕпе 5 хутчен тата район прокуратури ыйтнипе пĕр хут хавхалантарнă. Çак хавхалантарусем ăнсăртран пулманнине Н. Петров кăçалхи апрель вĕçĕнче пуçланă уголовнăй ĕç те çирĕплетет.

Лару-тăру çапла аталанса пынă. Апрель уйăхĕн вĕçĕнче Мăн Шашкарта çуралса ӳснĕ тата кунтах пурăнакан, унччен судпа айăпланман В. Мерлова ют пурлăха хапсăннипе саккуна пăсса пуяс тĕллевпе «Волга» чикĕллĕ яваплăхлă обществăн сĕт ферминчен хаклă япаласем вăрлама тĕллев лартать. Шухăша пурнăçламаллах. Кая хăварсан каю шăтать.

...Çĕр-шыв çурхи шыв-шуртан типме пуçланă тĕттĕм каç. Календарь çинче апрелĕн 27-мĕшĕ. Вăхăт 23 сехет. Пĕрремĕш кун мар ĕмĕтленнĕ ĕçе кĕçĕр пурнăçламаллах. Хăрассине çĕнтерсе Валентина «Волга» обществăн сĕт фермине пырса кĕрет. Аçта мĕн выртнине пĕлет ĕнтĕ вăл. Çавăнпа та вăхăта çухатмасăр хайхискер Мăн Шашкар фермин склачĕ умне пырса тăрать. Пăта кăлармалли хатĕрпе (гвоздедер) хĕç-пăшалланса нумай вăхăт шухăшласа тăмасăр чӳречене картлакан тимĕр решеткене туртса кăларать те склад пӳлĕмне кĕрсе тăрать. Кунта вара пуянлăхĕ сахал мар: сĕт тултармалли 40 литрлă 7 алюмини бидон (кашни 840 тенкĕ тăрать), 20 литр кĕрекен сĕт сумалли 8 аппарат (кашнин хакĕ 1670 тенкĕ). Аппетит апат çинĕ май вăйланать теççĕ те, ку хутĕнче те çапла пулса тухать. Пĕр складра «çуçаланнă» хĕрарăм çĕрлехи бизнеса вăйлатас тĕллевпе хăй суйласа илнĕ преступлă çулпа фермăри ĕне сарайĕнче пулнă май ирĕк пуррипе усă курса тепĕр склад пӳлĕмне кĕрет те 15 пин тенкĕ тăракан сĕт насусне хĕстерсе тухать. «Пысăк бизнес» çулĕ çине тăнă «коммерсант» çакăнпа та лăпланма шутламасть. Кĕçех унăн аллинчи пăта кăлармалли хатĕр уменче пăрусен сарайĕн алăкĕсем те «тытăнса тăраймаççĕ». Кунти складран кĕçех 10 литрлă 20 витре (кашнин хакĕ 78 тенкĕ) «тухса шăвăнаççĕ». Фермăра складсем нумай. Кĕçех çĕрлехи «коммерсант» тепĕр склад алăкне «çĕнсе» 800 литрлă алюмини шăнăçа та «хăйĕн» тăвать. Çапла вара хастар «коммерсант» пĕр каçрах 65 пин те 800 тенкĕлĕх «ĕç» тăвать. Ял çынни пĕчĕк ĕç укçи илет тесе кала кун хыççăн. Ара унăн пурте пур-çке.

Çак ĕç пирки тепĕр кун ирхине пĕлтерӳ шалти ĕçсен пайне çитсен, тĕпчеве Николай Геннадьевич Петров следователе шанаççĕ. Шанаççĕ те вăл вара шанăça тӳрре кăларать. Пулнă преступлени тĕлĕшпе вăхăтлă тĕпчев ĕçĕсем ирттерсе вăхăт шунă май следователь пĕрремĕш ĕçе уçса палăртнă хушăра 2-мĕшпе 3-мĕш ĕçсене те тăрă шыв çине кăларать. Çапла вара Валентина Варсонофьевна Мерлова мĕн тунипе çырлахмасăр çак çулхи çу уйăхĕн 3-мĕшĕнче 11 сехетре Мăн Шашкарти ĕне фермин склад пӳлĕмне кĕрсе 500 литрлă алюмини шăнăça (хакĕ 3 пин тенкĕ) «уралантарать». Тепĕр çур сехетрен «коммерсантăн» алли Мăн Шашкарти сĕт фермин котельнăйĕнче «йĕр» хăварать. Кунтан тăруках 300 кг свинец изоляторсем, тимĕр решетке, тимĕр шкаф, ĕнесене шăвармалли 7 чугун поилка, транспортер шестернисем тата ытти те «çухалаççĕ». Пĕтĕмпе 17 пин тенкĕлĕх.

В. Мерлова йĕркене пăснă ĕçĕсене туллин уçса парса саккун умне тăратсан, вăл хăйне айăпланипе пĕтĕмпех килĕшрĕ.

Суд В. Мерлована Раççей Федерацийĕн Уголовнăй Кодексĕн 158-мĕш статйин 2-мĕш пайĕн «б» пункчĕпе виçĕ тĕслĕхĕнче те 180-шер сехет обязательнăй ĕçпе айăпларĕ. Айăплавсене пĕрле хушсан унăн виçи 210 сехет пулчĕ.

Айăплав виçи камшăн мĕнле пулĕ, анчах çакă çеç паллă: йĕрке пăсакана саккун шыраса тупатех. Шалти ĕçсен пайĕ те ку тĕлĕшпе çывăрмасть.

Анатолий БЕЛОВ.

Сăн ӳкерчĕкре: шалти ĕçсен пайĕн следстви уйрăмĕн следователĕсем Павел Павловпа Николай Петров (малти) кашни уголовнăй ĕçех тĕплĕ тишкереççĕ.

Автор сăн ӳкерчĕкĕ.